Уяв умĕнхи интервью

# Йывăрлăхсене те хамăрăнах çĕнсе пымалла

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Иртнĕ çул 24 километра яхăн çĕнĕ çулсем тунă районта. Кăçал мĕнле задачăсем тăраççĕ инженерипе социаллă инфраструктура объекчĕсене тăвас ĕçре?**

– Пурăнмалли çурт-йĕр фондне тĕплĕ юсассипе тимлемелле. Муркашри, Мăн Сĕнтĕрти, Ярославкăпа Москакассинчи (пĕтĕмпе 9 çурт) нумай хваттерлĕ çуртсен тăррисемпе путвалĕсене, хăшĕсенне фасачĕсемпе инженери коммуникацийĕсене юсамалла. Çакна валли укçа-тенкĕ пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшмалли фондран уйăраççĕ. Тата – республика, район бюджечĕсенчен.

Çавăн пекех ял тăрăхĕсене те вырăнти çулсене тĕксе тӳрлетме, пĕчĕк юсав ĕçĕсене туса ирттерме май пур паян. Вырăнти çулсене тытса тăма ял тăрăхĕсене республикăран 6 млн. та 314 пин тенкĕ укçа куçарса панă. Унсăр пуçне ку тĕллевпе вырăнти бюджетран 7 млн. та 903 пин тенкĕпе усă курмалла.

Район территорийĕнчи 284,5 километр тăршшĕ çула тытса тăма вара республика тата район бюджечĕсенчен 13 млн. 21 пин тенкĕ укçа уйăрнă.

Паян пирĕн авариллĕ лару-тăруллă çуртсенчен çынсене кăларассипе те тимлемелле. Пĕтĕмпе çак программăпа килĕшӳллĕн 54 хватерпе тивĕçтермелле: пурĕ 48,7 миллион тенкĕлĕх. Унсăр пуçне çынсене çурт-йĕрлĕ пулма пулăшакан ытти программăсемпе те ĕçлетпĕр. Республика программипе килĕшӳллĕн 2 çемье çурт-йĕрлĕ пулма паракан патшалăх пулăшăвне илме тивĕçли çинчен калакан свидетельствăсене илчĕç. «Яла 2012 çулччен аталантарасси» программăпа килĕшӳллĕн РФ бюджетĕнчен 4 млн. 490 пин тенкĕ, республикăран 1 млн. та 170 пин тенкĕ, район бюджетĕнчен 3 млн. та 323 пин тенкĕ уйăрнă. Çавăн пекех «Çурт-йĕр» федераллă программăпа та укçа килсе çитмелле.

Паян ĕçлемелли çивĕч ыйтусенчен пĕри – çӳп-çап тăкмалли полигон тăвасси. Ку ыйтăва кăçал татса памалах. Полигон проекчĕ экспертиза витĕр тухнă. Çитес вăхăтра çакна валли усă курмалли çĕре ял хуçалăх пĕлтерĕшĕнчен промышленность пĕлтерĕшĕ çине куçармалла. Çак полигона пăхса тăма çӳп-çап тăкмалли автомашина, экскаватор тата самосвал туянма палăртнă. Хамăр çĕршыври производительсене пулăшмалли программăпа килĕшӳллĕн хакăн 70 процентне РФ бюджетĕнчен, тепĕр 30 процентне хамăр бюджетран саплаштармалла. Полигона (пĕрремĕш котлованне кăçал хута ямалла (пурĕ 4 котлованран тăрать), кашни ял тăрăхĕнчен çӳп-çапа çӳлерех асăннă транспортпа турттармалла. Кунта виçине шутласа, таптаса тăраççĕ. Палăртмалла, полигон паянхи требованисене тивĕçтерекенскер пулать: вăл çĕре сиен ан кӳтĕр тесе унта пур ĕççене те туса ирттереççĕ.

Халăха шывпа тивĕçтерес ыйтупа та ĕçлетпĕр паян районта. Централизациленĕ майпа халăха шывпа тивĕçтересси пирĕн районта 84 процентпа танлашать. Республикăри лайăх кăтартусен шутĕнче çакă. Шыв башнисем социаллă пысăк пĕлтерĕшлĕ объектсем шутланаççĕ. Çавăнпа та ял хуçалăх предприятийĕсем е ытти формăллă предприятисем хăйсен балансĕ çинчи башньăран халăха шыв парса тăма тивĕç. Тытса тăраймасан, вĕсене ял тăрăхĕн балансĕ çине куçармалла. Кун пек тусан, ку тĕллевпе республикăран укçа куçарма шантараççĕ. Ял тăрăхĕсем шывпа тивĕçтерекен предприятипе килĕшӳ туса ĕçлесе пыраççĕ. Çакăн пек опыт пирĕн районта пур ĕнтĕ. Юнкă, Катькас, Мăн Сĕнтĕр, Москакасси ял тăрăхĕсем «Жилкомсервис» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа килĕшӳ туса пурнăçлаççĕ ку ĕçе.

Çавăн пекех кивĕ шыв пăрăхĕсене юсассипе те ĕçлемелле.

**– Юрий Александрович, кăçал халăхшăн пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтусемпе те лав вырăнтан тапранни палăрать. Пушар хăрушсăрлăх ыйтăвне илер-ха, тĕслĕхрен.**

–Пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ чăннипех те районта çивĕч тăрать. Кăçал çулталăк пуçланнăранпа районта 22 пушар пулнă. Ку вăл, иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, чылай пысăкрах кăтарту. 131-мĕш федераллă саккунпа килĕшӳллĕн кăçалхи апрелĕн 30-мĕшĕнче «Муниципаллă пушар хуралĕ çинчен» кăларнă ятарлă йышăнупа килĕшӳллĕн темиçе ял тăрăхне пĕрле пулса муниципаллă пушар хуралне тума сĕнтĕмĕр. Вĕсем Мăн Сĕнтĕр, Ярославка, Ярапайкасси, Йӳçкасси ял тăрăхĕсенче пулмалла. Ку ĕç вырăнтан тапранчĕ ĕнтĕ. Ярославка ял тăрăхĕнче Чемейре июнь уйăхĕнче асăннă пушар хуралĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Ял тăрăхĕсем тунă тепĕр палăрăмлă самант вăл – ял тăрăхĕсен аталанăвĕн генеральнăй планĕсене туса пĕтерни.

**– Социаллă сфера аталанăвĕ çинчен мĕн палăртнă пулăттăр? Мĕн енĕпе тимлемелле ытларах вĕсенче?**

– Район администрацийĕ яланах халăхăн уйрăм категорине кĕрекенсене социаллă пулăшу парассине мала хурать. Ку енĕпе пурнăçа кĕртмелли ыйту вăл – пĕччен, çывăх тăванĕсен хӳтлĕхĕсĕр юлнă ватăсене социаллă хваттерсемпе тивĕçтересси.

Паянхи куна районта ĕççĕррисен йышĕ –245 çын. Вĕсене ĕç вырăнĕ тупса парассипе те, предприятисемпе учрежденисенче хушма ĕç вырăнĕсем туса хурассипе те ĕççем пыраççĕ.

Сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче юлашки çулсенче нумай ырă улшăнусем пулса иртрĕç: вĕсем диагностика, сиплев оборудованийĕсемпе пуянланчĕç. Кунта манăн медицина ĕçченĕсем мал туртăмлă пулнине палăртас килет. Халĕ вĕсем Чăваш Республикинче иртекен «Чи лайăх сиплев учрежденийĕ» конкурса хутшăнаççĕ.

Вĕрентӳ сферинче шкулсем паянхи кун ыйтакан вĕрентӳ пӳлĕмĕсемпе, вĕрентӳ тата ытти оборудованисемпе пуянланни савăнтарать. Малашне те пур ресурссемпе те эффективлă усă курмалла, вĕрентӳ учрежденийĕсен сечĕсене оптимизацилес енĕпе тимлемелле. Анчах та ачасен йышĕ чакни шкулсен статусне улăштарасси патне илсе пыма пултарать.

Ялсенчи культура учрежденийĕсене çĕнетсе улăштарассипе ĕççем пыраççĕ.

**– Юрий Александрович, калаçу вĕçленнĕ май вулакансене мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

– Ентешĕмĕрсене пурне те Раççей кунĕ ячĕпе тата Акатуй уявĕпе ăшшăн саламлатăп. Пурнăç вăл нихăçан та çăмăл мар. Эпир чунпа çирĕппине, кирек епле йывăрлăха та çĕнтерсе малалла кайма пултарнине истори страницисем те çирĕплетеççĕ. Аслă ăру çыннисенчен тĕслĕх илсе, малашне те пĕр-пĕрне ăнланса, район аталанăвĕшĕн, çĕршыв çирĕплĕхĕшĕн пĕр тĕллевлĕн вăй хурасчĕ. Пирĕн районăмăр та, çĕршывăмăр та пĕрре. Апла пулсан йывăрлăхсене те пирĕн хамăрăнах пĕрле пулса татса памалла. Хамăрăн пурнăçа пирĕн хамăрăнах йĕркелесе пымалла.

Пулас тыр-пул никĕсне йĕркеллĕ хывса хăвартăмăр ĕнтĕ. Çакă механизаторсем, специалистсемпе хуçалăхсен ертӳçисем, пур ял ĕçченĕ тăрăшса вăй хунине кăтартса парать. Халĕ пирĕн тĕллев – акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене йĕркеллĕ пăхса çитĕнтересси. Çавăнпа та кашни хăйĕн тивĕçне малашне те чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шанас килет.

Пурне те район аталанăвĕшĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн тав тăватăп, уявсене тулли кăмăлпа ирттерме ырлăх-сывлăх, телей сунатăп. Ĕçĕрсем малалла та ăнса пыччăр. Сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм пултăр, çемьере килĕшӳпе юрату хуçалантăр, телей пурнăçăр çулне уççах пытăр.

**– Тавах, Юрий Александрович, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА**
**калаçнă.**

Акатуй саламĕ

# Ял çыннисем тăрăшуллă

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Çĕнĕ сортсем тенĕрен, иртнĕ çулхи пĕр танлаштарупа паллаштарас килет. Çĕнĕрен илсе килнĕ «Владимир» урпапа юнашар хамăр патра унччен пулнă урпан «Эльф» сортне акрăмăр. Мĕн тетĕр эсир, кĕр çитсессĕн пĕрремĕшĕ гектартан 73 центнер, иккĕмĕшĕ 40 центнер тухăç пачĕç. Икĕ ани çинче те пĕр ĕççенех пурнăçларăмăр, пĕр тăкаксенех турăмăр. Пĕтĕмлетӳ вара шухăшлаттарать. Пирĕн тĕллев – тырă туса илесси çеç мар, районти хуçалăхсене пысăк репродукциллĕ вăрлăхпа тивĕçтересси. Сăмах май паян эпир сĕлĕн çĕнĕ сорчĕ пирки шутлатпăр. Ăна çитес çулхи çур акинче пурнăçа кĕртĕпĕр.

Акнипе çеç кĕлет тулманнине те эпир лайăх ăнланатпăр. Çавăнпа та паян акнă культурăсем çинчи çум курăкĕпе кĕрешессине малти вырăнта тытатпăр. Çак тĕллевпе тырă лаптăкĕсене гербицид сапса тухрăмăр, çĕр улми речĕсене те пĕрремĕш хут чĕрсе кăпкалатрăмăр. Çумпа кĕрешес ĕççем хуçалăхра малалла пыраççĕ.

Çур акире хуçалăх ĕçченĕсем пурте хастар пулчĕç. Çапах паян манăн Леонид Макаров, Александр Александров, Николай Петров, Алексей Васильев, Юрий Егоров механизаторсене, гербицид сапассипе тăрăшуллă ĕçлекен Николай Иванов трактористă, пур уй-хир ĕçченĕсене пурнăçланă ĕççемшĕн уйрăммăн тав тăвас килет. Эсир «симĕс ĕç çире» те хастар пуласса шанатăп.

Эпир хуçалăхĕпех ыранхи куна пăхса ĕçлеме хăнăхса çитрĕмĕр темелле. Çак тăрăшулăх специалистсенче те, механизаторсемпе уй-хир ĕçченĕсенче те, выльăх отраслĕнче вăй хуракансенче те курăнать. Пĕрле пулсан вара нимĕнле йывăрлăх та хăрушă мар. Пурсăра та тав! Хамăр хуçалăх ĕçченĕсемпе пĕрлех тав сăмахĕ районти пур çĕр ĕçченне те.

**И. НИКОЛАЕВ, Ильич яч. хис. хуçалăх ертӳçи, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ.**

Раççей кунĕнче Раççей Геройĕн амăшĕ патĕнче

# «Коля çуккине ĕненес килмест»




Юлашки кунсенчи ăшă пĕтĕм йывăç-курăка пурнăç пачĕ, улăх-çарансенчи чечексем те хăйсен çу илемĕпе таврана хăт кĕртрĕç, кăнтăртан килнĕ кӳршĕ ĕшнери вĕçен кайăксен татти-сыпписĕр юрри-кĕвви пурнăç малалла аталанни пирки калать. Урампа иртнĕ чух та, вăрманпа пынă май та епле киленмĕн-ха çут çанталăкăн çак пархатарĕпе! Çапла, эпир паян çак илемпе туллин савăнатпăр, унпа киленсе малашлăх планĕсем хатĕрлетпĕр. Анчах ку вăл йăлтах паян... Пирĕн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашизма çапса аркатнăранпа 64 çул çитнине тата çĕршыври йĕркелĕхшĕн ун хыççăнхи тапхăрта пуç хунă салтаксен паттăрлăхне тишкерсен, çак илемлĕ пурнăçшăн мĕн чуль юн юхнине шутлатăн та – куçсем шывланаççĕ. Ку та вăл паян.

...Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи 49 çул тултарнă тапхăр та халăхăмăра иртнĕ вăрçăн синкерлĕ енĕсене ытларах та ытларах кăтартса пачĕ. Анчах вăрçă хăйĕн хăрушлăхне çухатмасть-ха. Çакна мирлĕ çывăракан Раççей халăхĕ çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнчен 19-мĕшне пыракан çĕрле шутламарĕ те. Таджикистанпа Афганистан чиккинчи чикĕ хуралçисем кăна служба тивĕçĕсене пурнăçласа куç хупмарĕç: шăппăн шӳтлерĕç, пирус мăкăрлантарчĕç... Акă каç сĕмĕпе пĕр мĕлке пирĕн еннелле куçни курăнчĕ, хыççăн тепри, виççĕмĕшĕ, ют сасăсем...

– Чарăнăр! Кам килет? – ыттисенчен маларах алла автомат тытса сиксе тăчĕ 27 çулхи кĕçĕн сержант Николай Смирнов.

Малти мĕлке çĕр çине выртса куçран çухалчĕ. Ыттисем те куçми пулчĕç, сасăсем шăпланчĕç. Отделенири пограничниксем командирпа пĕрле кĕтмен хăнасем еннелле утăмларĕç кăна – чикĕри шăплăха автомат черечĕсем сирсе ячĕç. Отделени командирĕпе юнашар тăракан пограничник йынăшса çĕре тĕршĕнсе анчĕ. Çав вăхăтра минометсемпе гранатометсем харăс пеме пуçларĕç, пограничниксен позицийĕсем çине реактивлă снарядсем вĕçме тытăнчĕç.

– Пурте выртăр! – команда пачĕ Коля пирĕн пограничниксем çине тăхлан çумăр йăтăнса аннине курса. Пуç çĕклеме те майĕ çук. Афган вут-çулăмĕ витĕр тухнă, халĕ контракт йĕркипе çĕршывăн чикĕ хуралне тăнă кĕçĕн сержант пограничниксене çывăхри чулсем хушшине пытанса хӳтĕлев позицийĕсем йышăнма сĕнчĕ. Хирĕç пеме тăхтамалла!

Раççей пограничникĕсем шăп пулнипе тăшмансем ура çине тăрса Раççей еннелле утма пуçларĕç. Йышлăн иккен вĕсем, таджик боевикĕсемпе афган моджахечĕсем.

– 1987-1988 çулсенче Афганистанра сирĕн ирсĕр ĕçĕрсене сахал сирме тиврĕ-и? Халĕ Раççее васкатăр? Çук, сире хамăр Тăван çĕршыва кĕртместĕпех, – тесе шутларĕ те Коля, командир еннелле çаврăнчĕ. Унтан – 18 çулхи çамрăксем енне. Çак вăхăтра командир чикĕ пăсакансене вут-çулăмпа ăшаласа илме приказ пачĕ. Раççей салтакĕсен аллинчи хĕç-пăшал та тикĕс ĕçлет: тăшмансен речĕсем самантрах сайраланчĕç.

– Отряда пĕлтер! – хушрĕ васкаварлăн автоматран пеме чарăннă хушăра çыхăнуçă пограничнике отделени командирĕ. Раци ĕçлет, апла пулсан кĕçех пулăшу та çитет. Çапăçу вара хĕрсех пырать. Акă кӳршĕри чул хыçĕнче выртакан командирăн автомачĕ шăпланчĕ. Ырă мара сиссе кĕçĕн сержантăн ӳт-пĕвĕ тăрăх сивĕ чупса иртрĕ. Татах тепĕр автомат шăпланчĕ, кăшт вăхăтран позицири чи çӳллĕ чул хыçĕнчи...

– Çыхăнуçă пĕлтерчĕ, апла пулсан отряд çул çинче. Инçех те мар-тăр вĕсем. Кĕçех çитĕç. 18-19 çулхи ачасене ма пĕтерес? – шутларĕ отделени командирĕ. Шутларĕ те çапăçу лăпланнă вăхăтра юлташĕсем еннелле çаврăнса:

– Итлĕр манăн приказа. Пуç хунă юлташсен документĕсене тата йывăр аманнă юлташсене, командира илсе хăвăрт каялла чакăр! Пурте кунта юлма хăрушă. Пулемет манпа юлать, – терĕ.

Пограничниксем хирĕçлеме пăхрĕç, анчах сержантăн хаяр куçĕсем пăхăнтарчĕçех вĕсене.

Çамрăксем каялла кайни пĕр минут, иккĕ...

– Ытларах чакма ĕлкĕрччĕрччĕ çеç, – юлташĕсем пиркиех шутлама чарăнмарĕ командир каялла çаврăнса пăхса. Çав вăхăтра амăшĕпе шăллĕн, хăй Афганра чух çĕре кĕнĕ ашшĕн, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çапăçнă аслашшĕн сăнĕсем, инçетри Шупашкарпа хăй çуралса ӳснĕ Кашмаш ял урамĕсем куç умне тухрĕç. «Енчен те тăшмансем чикĕ урлă каçса кайсан, Чăваш çĕршывне епле таврăнас, тăвансене куçран мĕнле пăхас? Афганистан вут-çулăмĕ каялла чакма вĕрентмен», – шутласа илчĕ Коля. Çав вăхăтра чикĕ пăсакансем пуç çĕклерĕç, хăлха патĕнченех пульăсем шăхărса иртрĕç.

– Çук, Раççей сире валли мар, – тесе Коля Смирнов пулемета ĕçлеттерсе ячĕ. Малта пыракан моджахетсемпе боевиксем аллисемпе кăкăртан тытса çĕре тĕршĕнсе анчĕç. Ыттисем выртрĕç, анчах çапăçу шавĕ лăпланмарĕ. Кĕçĕн сержант каллех Раççей еннелле çаврăнса пăхрĕ. Илемлĕ иккен Тăван çĕршыв. Унта тăшман ури пусмасан вăл татах тĕрекленĕ, вăйланĕ, атте-аннесен пурнăçĕ те çĕнĕ шая çĕкленĕ. Çакна валли мир кирлĕ. Çапла мĕлтлетнĕ шухăшпах вăл пулемет курокĕ çине пусрĕ.

...Анчах пысăк йыш хăйĕннех тăвать. Моджахетсемпе боевиксем Раççей позицийĕсенчен пĕр пулемет çеç пенине ăнланса Кольăна хупăрлама пуçларĕç. Çакна Раççей пограничникĕ те ăнланчĕ, анчах мĕн тăвас – чакма юрамасть. Патронсем пур-ха та, анчах вĕсем те вĕçĕмсĕр мар. Çапла шутласа Коля чул çумне сĕвенсе патронсене шутларĕ, каллех юратнă Раççей еннелле пăхса илчĕ.

– Ур-р-ра! Пирĕннисем килеççĕ. Апла пулсан тăшмансем Раççее иртеймерĕçех! – савăнса кайрĕ кӳршĕ сăртран пирĕн салтаксем чупса аннине курса. Хăй вара пулемета тăшмансем еннелле çавăрса пеме пуçларĕ.

– Акă сире пирĕн парне. Раççее мĕнпе килетĕн – çавна илетĕн, – тарăху витĕр савăнăçлăн кулса каларĕ Коля. Çав вăхăтра çывăхри ту хысакĕ çине хăпарнă моджахета асăрхаймарĕ вăл. Тăшманăн кĕске черечĕ Раççей пограничникне каялла çаварчĕ. Унăн аллинчи пулемет çĕре тухса ӳкрĕ.

– Пирĕннисем çитрĕç. Тăшман чикĕ урлă каçаймарĕ. Апла эпир приказа пурнăçларăмăр, – вĕлтлетрĕ юлашки шухăш...

– Чикĕри çапăçу пирки ирпе радио каларĕ. Пуç хунисене те хушаматпах пĕлтерчĕ. Ĕненес килмерĕ, куç хуралчĕ. Кайран çар комиссариатĕнчен килчĕç, – куççульне шăлса аса илет Кольăн амăшĕ Тамара Леонидовна. – Эпĕ Раççей Геройне çуратса ӳстерĕм тесе шутланă-ши хăçан та пулсан. Çук. Чăн-чăн арçын пултăр çеç тесе ĕмĕтленнĕ эпĕ.

Тамара Леонидовна Кашмашра çуралса ӳснĕ. Ялти шкулта 8 класс вĕренсе пĕтерсенех Кашмашри сĕт фермине дояркăна ĕçе кĕнĕ. «14 ĕнеччĕ ушкăнра. Вĕсене алăпа шыв йăтса шăвараттăмчĕ. Йывăрччĕ, анчах алă усман», – шăппăн калаçать Çĕньял Хуракасси каччипе Валерий Александрович Смирновпа çемье çавăрнă хыççăн хулана пурăнма куçса агрегат заводĕнче чылай ĕçленĕ хĕрарăм. Ĕçпех инвалидноç илнĕ Тамара Леонидовна паян кĕçĕн ывăлĕ Гена тата унăн çемйи пулăшнипе пурăнать.

– Коля шкулта япăх вĕренмен, ун пирки усал ят илтмен. Спортпа туслăччĕ вăл. Боксерччĕ. 1986 çулта салтака кайма ят тухсан та пăрăнса юлмарĕ. Декабрьте çара илчĕç те çĕнĕ çулччен çыру илтĕмĕр. «Ашхабада лекрĕмĕр. Çанталăкĕ ăшă, грушăпа пан улми нумай», – тесе çырчĕ малтан. Тепĕр çырăвех «Это письмо пишу с Афганистана» йĕркепе пуçланчĕ. Амăшĕн чунĕпе таса-сывă таврăнма Турра сахал тархасларăм-и! Йĕркеллех таврăнчĕ, анчах çар пурнăçĕ чĕрине вырнаçнă пулас та 1994 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче контракт йĕркипе çара кайрĕ, чикĕ хуралне лекрĕ. Хуларан вĕсем 4-ăн кайнăччĕ те 3-шĕ пăрахса килчĕç. Коля юлчĕ. Пуçăннă ĕçе вĕçне çитерме хăнăхнăччĕ çав вăл. Çапла вара 1994 çулхи çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнчен 19-мĕшне пыракан çĕрле те вăл каялла утăм туман, – каллех куçне шăлса илчĕ салтак амăшĕ.

Тург постра çав каç паттăрла пуç хунă Николай Валерьевич Смирнова тепĕр тăвата юлташĕпе пĕрле (вилнĕ хыççăн) Раççей Президенчĕн Указĕпе 1994 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Геройĕн ятне панă.

2033 номерлĕ çар чаçĕн командирĕ В. Масюк подполковник Тамара Леонидовна патне янă çыруран: **«Сирĕн пата Мускав чикĕ отрячĕн командирĕ çырать. Манăн сăмахсем Сирĕн чун ыратăвне сиплеймĕç, анчах та Сирĕн мĕн пулса иртнине пĕлмеллех. 1994 çулхи августăн 18-мĕшĕнче 19 сехет те 42 минутра Афган моджахечĕсемпе боевиксем Таджикистан çарĕсен ушкăнĕ тăнă çĕре тапăнчĕç. Вĕсем каялла чакнă май тапăнакансем умне пирĕн пограничниксем тăчĕç. Токарев лейтенант ушкăнĕнчен тăракан салтаксем хăвăрт кăна тактикăлла лайăх вырăн йышăнни тăшмана малалла иртме памарĕ. Сирĕн ывăлăр хăйĕн пулемечĕпе тăшмана куçа-куçăн тăчĕ. Сахал мар моджахета, тăшманăн пулемет расчетне тĕп турĕ. Хăйĕн позицине тăтăш улăштарса тăнă май вăл çапăçăвăн чи хĕрӳ вырăнĕсенче пулчĕ. Вăл йывăр аманнă юлташĕсене çапăçу хирĕнчен илсе тухма май килнине пĕтĕмпех турĕ. Çапăçу хирĕнче Раççей малашлăхĕшĕн чыслăн пуç хучĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Геройĕн ятне илме тăратрăмăр».**

Раççейăн никама пăхăнманлăх кунĕнче çавăншăн пуç хунисем уйрăмах асра.

**Анатолий БЕЛОВ.**